Книжная палата

27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАРТ 6 ЫТЛАРИКУН 43(6794) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабӗн начальникне Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, мартӑн 5-мӗшӗнче, ШТАРГАРД, НАУГАРД, ПОЛЬЦИН хулисене—ҫулӗҫсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен Штеттин хули енчи оборонин хӑватлӑн тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ.

ШТАРГАРД, НАУГАРД, ПОЛЬЦИН хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: БЕЛОВ генерал-полковникӑн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантӑн, СИЯЗОВ генерал-майорӑн, ВЕРЖБИЦКИЙ генерал-майорӑн, ХАЛЮЗИН генерал-лейтенантӑн, КАЗАНКИН генерал-лейтенантӑн, СЕРЕГИН полковникӑн, СЕЛЮКОВ полковникӑн, ВЛАДИМИРОВ генерал-майорӑн, МОЩАЛКОВ полковникӑн, МАСЛОВ полковникӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, МАЛЬКОВ полковникӑн, ГОРИШНИЙ генерал-майорӑн, АНДОНЬЕВ полковникӑн, КОЗИН генерал-майорӑн, ШАФАРЕНКО генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; КОНСТАНТИНОВ генерал-лейтенантӑн, КРЮКОВ генерал-лейтенантӑн, ЯГОДИН генерал-майорӑн, МИЛЛЕРОВ генерал-майорӑн, КУРСАКОВ генерал-майорӑн кавалеристӗсем; артиллери генерал-майорӗн ЕГОРОВАН, ПУХОВ полковникӗн, ВАХРОМЕЕВ полковникӑн, МАЛОВ полковникӑн, АРУТЮНЯН полковникӑн, КАРЕЛИН полковникӑн, ПОНАМАРЕНКО полковникӑн, НЕБОЖЕНКО полковникӑн, ЕФРЕМЕНКО полковникӑн, ИВАНОВ подполковникӑн артиллеристӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн БОГДАНОВАН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ИВАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КИРИЧЕНКАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВЕДЕНЕЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ТЕЛЯКОВАН, ЕРЕМЕЕВ полковникӑн, КУЗНЕЦОВ полковникӑн, СЕКУНДА подполковникӑн, БАРАНЮК полковникӑн, ШЕМЯКИН полковникӑн, ЧЕРЯПКИН полковникӑн, ПОТАПОВ полковникӑн, ШАМАРДИН полковникӑн, КОПЫЛОВ полковникӑн, АБРАМОВ полковникӑн, МАКАРОВ подполковникӑн, ПАВЛУШКО полковникӑн, ОХМАН полковникӑн, ТАРАСОВ полковникӑн, КУЗИН подполковникӑн, ВИНОГРАДОВ майорӑн, РУМЯНЦЕВ подполковникӑн танкисчӗсем; ФЕДОРЕНКО полковникӑн, СУХОРЯБОВ полковникӑн, КАРЯГИН полковникӑн, МИРОНОВ полковникӑн, КОВАЛЕВ полковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, РАССКАЗОВ полковникӑн, КАЛИНИН полковникӑн летчикӗсем; КОЗЛОВ подполковникӑн, КОТОВ майорӑн, АБРАМОВ капитанӑн, ШКАРИН майорӑн, НАУМОВ майорӑн сапёрӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн ЛИТВИНЕНКОН, ХОТЬКО майорӑн, КОРСУН майорӑн, РОМАНОВСКИЙ майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ШТАРГАРД, НАУГАРД, ПОЛЬЦИН хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 5-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ШТАРГАРД, НАУГАРД, ПОЛЬЦИН хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑ ӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе ни кама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗ. № 290.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 3-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, мартӑн 3-мӗшӗнче РУММЕЛЬСБУРГ хулипе ПОЛЛНОВ хулине—ҫулӗҫсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен Померанири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 80 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ГРОСС ПЕТЕРКАУ, ШТАРЗЕН, ГРОСС ШВИРЗЕН, КУРОВ, ДАРГЕН ятлӑ пысӑк ялсем.

Чехословакире ЛУЧЕНЕЦ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ОЧОВА, КАЛИНКА, КРАЛЕВЦЕ, ПРЕНЧОВ, БЕЛУЙ, ПОЧУВАДЛО, УГЛИСКА, БРЕГИ ялӗсене ҫапӑҫса туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 2-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 39 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

МАРТӐН 4-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 4-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшманӑн Хӗвелтухӑҫ Пруссире хупӑрласа илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, КОНРАДСВАЛЬДЕ, ВЕССЕЛЬСХЕФЕН, ШПЕРВИНЕН, ПЕЛЛЕН, ХАССЕЛЬПУШ, КЛАЙН ЛЮДТКЕНФЮРСТ, ХОЕНФЮРСТ, БЛЮМБЕРТ, КИРШДОРФ, КЛОПХЕН ялӗсене туртса илнӗ.

ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, СКУРЦ хулине туртса илнӗ тата ГРАБАУ, БОБАУ, ОДРИ, ЛЮБНЯ, БРУСС ялӗсене йышӑннӑ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени малалла вӑйлатса пырса, мартӑн 4-мӗшӗнче Балтика тинӗсӗ хӗррине тухнӑ та КЕЗЛИН хулине—ҫулӗҫсен паха узелне тата нимӗҫсен ДАНЦИГ хулинчен ШТЕТТИН хулине каякан ҫулсем ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ. Ҫапла вара, тӑшманӑн Хӗвелтухӑҫ Померанири ҫарӗсене Хӗвеланӑҫ Померанири ҫарӗсенчен татнӑ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта йышӑннӑ, вӑл шутра — РАЙНВАССЕР, ПРИТЦИГ, ФЕЛЛИН, БУССИН, КРАМПЕ, ГРЮНЕВАЛЬД ятлӑ пысӑк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ШТАРГАРД хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫсен вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине татнӑ, тӑватӑ кун хушши наступлени туса пырса, 100 километр таран малалла кайнӑ, вара КОЛЬБЕРГ хули районӗнче Балтика тинӗсӗ хӗррине тухнӑ.

Наступлени туса пырса, фронт ҫарӗсем БЕРВАЛЬДЕ, ТЕМПЕЛЬБУРГ, ФАЛЬКЕНБУРГ, ДРАНБУРГ, ВАНГЕРИН, ЛАБЕС, ФРАЙЕНВАЛЬДЕ, ШИФЕЛЬБАЙН, РЕГЕНВАЛЬДЕ тата КЕРЛИН хулисене—ҫулӗҫсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен Померанири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 600 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ШЕНВАЛЬДЕ, ЛЕКОВ, ШТАРГОРД, ГРОСС ДАБЕР, УХТЕНХАГЕН, ВУЛЬКОВ (ШТАРГАРД хулинчен 5 километр хӗвелтухӑҫнерехре), ШЕНЕБЕРГ, ШВЕНДТ ятлӑ пысӑк ялсем. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем ШТАРГАРД хулинчен кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре ПИРИТЦ хулипе чугун ҫул узелне тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—КРЮССОВ, ДАМНИТЦ, ВЕРБЕН, ГИЗЕНТАЛЬ, БАББИН, ЛИБЕНОВ, НИТТЕРРИЗЕ, НИДЕРКРЭНИГ, ПЕЕТЦИГ ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 3-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 90 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 49 танкне персе ӳкернӗ.

ТАГАНРОГРИ КИСЛОРОД ЗАВОДНЕ ӖҪЕ ЯНА

Таганрогри кислород заводне юсаса ҫитерчӗ. Заводри работниксем строительсемпе пӗрле вӑйлӑ сывлӑш компрессорӗ тата икӗ установка туса лартса хута янӑ.

Завод халӗ хӑйӗн продукцине совхозсемпе МТС-сене парса тӑма пуҫланӑ.

Ҫуракине большевикла хатӗрленер!

Трактор юсама кирлӗ условисем туса паман

Елчӗк МТС-ӗн 63 трактор юсамалла пулнӑ, паянхи куна тӗлне вӗсенчен 52-ӗшне юсанӑ. Государство комиссийӗ тракторсене вӑтам юсанӑ тесе йышӑннӑ, уйрӑм ҫитменлӗхсене те кӑтартса хӑварнӑ. Трактористсемпе трактористкӑсем комисси кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерессишӗн тӑрӑшса ӗҫленӗ. МТС-ра пурӗ 17 трактор бригади. Вӗсем тракторсене юсас тӗлӗшпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ, пӗр-пӗрне ӗҫре пулӑшаҫҫӗ. 11-мӗшпе 10-мӗш трактор бригадисем хӑйсен тракторӗсене—январӗн 10-мӗшӗ тӗлне, 6-мӗшпе 14-мӗш трактор бригадисем — февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтернӗ. Вӗсем ҫавӑн хыҫҫӑн юлса пыракан бригадӑсене пулӑшма тытӑннӑ. Юсанӑ тракторсенчен 25-ӗшне колхозсене янӑ. Вӗсем халӗ колхоз сарайӗсенче лараҫҫӗ. Тракторсене юсас ӗҫре М. Казакова, Р. Катайкин, М. Сметанина, Л. Уткина, Е. Евдокимова, Н. Крысов юлташсем уйрӑмӑнах палӑрнӑ. Вӗсем куллен ирген пуҫласа тӗттӗм пуличчен ӑмӑртса ӗҫленӗ. Час-часах хӑйсен ӗҫ нормисене 2—3 хут ирттерсе тултарнӑ.

Тракторсемпе пӗрлех вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене те юсанӑ, 50 плуг, 16 сеялка, 28 культиватор юсаса лартнӑ. Тракторсене юсас ӗҫе нумай хӑвӑртлатма пулнӑ пулӗччӗ. Анчах та ун валли кирлӗ условисем туса паман. Тракторсене сивӗ сарайсенче юсаҫҫӗ, трактористсемпе трактористкӑсем валли пӗрлешӳллӗ столовӑй уҫман. Ҫавӑнпа та трактористсем тӗрлӗ вӑхӑтра апата кайса, вӑхӑта нумай ирттереҫҫӗ. МТС дирекцийӗ тата районри партипе совет организацийӗсем тракторсене юсама кирлӗ пек условисем туса парассишӗн тӑрӑшман. Ахальтен мар ӗнтӗ хӑшпӗр трактористсем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑна вӑхӑтра пурнӑҫламан.

МТС директорӗ Яшин, старши механик Указов юлташсем машинӑсене тирпейлӗ усрасси ҫине кирлӗ пек ҫаврӑнса пӑхман. Ялхуҫалӑх машинисенчен 68 плуг, 20 сеялка, 35 культиватор, 26 комбайн тата 18 молотилка колхозсенче, ӑҫта ӗҫленӗ, ҫавӑнтах—уҫӑ вырӑнсенче, юр айӗнче лараҫҫӗ. Ҫак паха машинӑсем тутӑхса, ҫилпе тата хӗвелпе кушӑрхаса пӗтеҫҫӗ. Уйрӑмӑнах 4-мӗш, 7-мӗш, 9-мӗш трактор бригадисем хӑйсен машинисем ҫине ответсӑррӑн пӑхнӑ. Вӗсем машинӑсен ӗҫлекен пайӗсене ҫӳп-ҫапран, пылчӑкран тасатман, металран тунӑ пайӗсене ҫу сӗрсе хуман. «Малалла», «Коммунист», «Красный партизан» колхозсенче юлнӑ комбайнсене пӗтӗмпех юр хӳсе кайнӑ. Часах юр ирӗлме тытӑнать, анчах ҫак машинӑсене юр айӗнчен кӑларас тесе никам та нимӗн те тумасть.

Мускав облаҫӗнчи Ногинск районӗнчи колхозниксен паха пуҫарӑвӗ ҫинчен колхозсенче сӳтсе-явнӑ. Колхозсем МТС строительстви валли 420 кубометр йывӑҫ хатӗрлеме обязательство илнӗ, анчах ҫак обязательство хут ҫинче кӑна юлнӑ. ВКП(б) райкомӗпе райисполком ҫак паха пуҫарӑва кирлӗ пек ертсе пымаҫҫӗ-ха.

П. КОЗЛОВ.

Халех тумалли ӗҫ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Районри колхозсенчен нумайӑшӗ, тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе, ҫулталӑкри отчетсене туса ҫитерчӗ. Ҫав отчетсене колхозниксен пухӑвӗсенче сӳтсе-явса, райсовет исполкомӗнче ҫирӗплетнӗ. Малта пыракан колхозсем тупӑшсем валеҫес тата ҫулталӑкри отчетсем тӑвас ӗҫе ҫуракине хатӗрлечӗ ӗҫпе таччӑн ҫыхӑнтарса пычӗҫ. «Труженик», «Коминтерн», «Путь социализма», «Совет» колхозсем ҫак ӗҫе тунӑ май колхозниксемпе колхозницӑсене ҫитес ҫул татах та вӑйлӑрах тырпул туса илес ӗҫе мобилизацилерӗҫ. Вӗсем 1944—45 ҫулхи хӗллехи агротехника ӗҫӗсен планне пӗтӗмӗшпех пурнӑҫларӗҫ, ҫураки валли пысӑк пахалӑхлӑ вӑрлӑхсем хатӗрлерӗҫ, ӗҫ хатӗрӗсене юсаса ҫитерчӗҫ.

Анчах районра паянхи куна ҫулталӑкри отчетсене туса пӗтермен колхозсем те пур-ха. «Профинтерн», «Чӑваш Коммуни», Буденный, Киров ячӗсемпе тӑракан колхозсем халӗ те тупӑшсене валеҫсе, ҫулталӑкри отчетсене туса пӗтермен. Ку колхозсенче ревизи комиссийӗсем те ӗҫе тытӑнман.

Тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе, ҫулталӑкри отчетсене туса ҫитермелли срок тахҫанах иртрӗ. Ку ӗҫе халех вӗҫлемелле. Районри ҫӗрӗҫ пайӗн юлса пыракан колхозсене тивӗҫлипе пулӑшмалла.

П. ТИХОНОВ.

Илнӗ обязательствӑна пурнӑҫламалла

Калинино районӗнче иртнӗ ҫул МТС организациленӗ. Паллах, ку вӑл районри колхозсемшӗн калама ҫук пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ.

МТС совечӗн 1-мӗш ларӑвӗнче колхоз председателӗсемпе ялсовет председателӗсем МТС-а пур енчен те пулӑшса пыма сӑмах панӑ. Ногинск районӗнчи колхозниксен примерне тӗпе хурса ӗҫлесе, МТС валли мастерской, тимӗрҫӗ лаҫҫи, контора ҫурчӗ, трактористсемпе служащисем валли общежити, машинӑсем валли сарайсем, гараж, нефтебаза тума йышӑннӑ.

Паллах, МТС валли ҫуртйӗрсем тӑвас пулсан, вӑрман, строительство материалӗсем нумай кирлӗ. Пурӗ 1.200 кубометр вӑрман касса турттармалла пулнӑ. Ку ӗҫе тума колхозсен ҫынсем уйӑрмалла тата лашасем ямалла. Ҫуртйӗрсене хӑвӑрт туса пӗтерме 80 платник кирлӗ.

Услапари «Броневик» колхоз (председателӗ Федоров юлташ) хӑй илнӗ обязательствӑна пурнӑҫланӑ. Ҫак колхоз мӗн пурӗ 80 кубометр стройматериал турттарнӑ, 40 кубометр вӑрман каснӑ, 3 колхозран пӗр амбар панӑ. Халь татах контора ҫуртне тума 6 платник янӑ. Киров тата Папанин ячӗсемпе тӑракан колхозсем те платниксем янӑ. Ленин ячӗпе тӑракан тата «Ҫӗнъял» колхозсем пӳрт илсе турттарса панӑ, ҫуртне лартассине те хӑйсем ҫине илнӗ.

Анчах ҫав хушӑрах «тума йышӑннине виҫӗ ҫул кӗттерес» текен шухӑш-кӑмӑллисем те тупӑнаҫҫӗ. «Пучах» колхоз председателӗ Иванов, Пушкин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Виноградова, Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Кураков тата «Трактор» колхоз председателӗ Васильев хӑйсен обязательствисене пурнӑҫламаҫҫӗ. Вӗсен колхозникӗсем йышӑннӑ тӑрӑх, вӑрмантан йывӑҫ турттарма ҫынсем, лашасем ямалла пулнӑ. Анчах вӗсем хӑйсен обязательствисене манса кайнӑ.

Стройматериалсем касса хатӗрлес тата турттарас ыйтупа МТС дирекцийӗ сахал мар ӗҫленӗ. МТС-ри трактористсемпе курсантсем тата служащисем хӑйсем 800 кубометра яхӑн вӑрман каснӑ. Ҫав вӑхӑтрах Алгазинӑри «Чӑваш Коммуни», Кӳлхӗрринчи «Трактор» тата Ермошкинӑри Калинин ячӗпе тӑракан колхозсем вӑрмана пӗр ҫын та яман. Ҫавна пула строительство ӗҫӗ ку таранччен тӑсӑлса пырать. Ҫуртйӗрсене тунӑ ҫӗрте те платниксем ҫитмеҫҫӗ. Кун пекех ӗҫлесен, МТС-ри строительствӑна район ҫуракиччен вӗҫлесе ҫитерейместь. Ҫав ӗҫе пурнӑҫлас тесен, ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗн тата колхозсен МТС-а ҫирӗп пулӑшу памалла.

С. ШАДИН.

Укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе хакламаҫҫӗ

КӲКЕҪ. (Хамӑр корр.). Шӑнкас ял Совечӗн исполкомӗ иртнӗ ҫулта ялхуҫалӑх налог укҫине 25 пин тенкӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налог укҫине 20 пин тенкӗ пухса ҫитермен. Ял Совечӗн кӑҫал самообложени укҫине 4 пин тенкӗ тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налог укҫине 105 пин тенкӗ пухмалла.

Ял Совечӗн исполкомӗ укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе тытӑнман, паянхи куна ҫитсе пӗр пус та пухман. Ял Совет исполкомӗ ҫак ӗҫе депутатсене, ялти актива явӑҫтармасть. Ял Совет исполкомӗн председателӗ Смородинова юлташ районри финанс отделӗн налог агентне ӗҫре пулӑшса пымасть. Ҫавна пула ял Совечӗ укҫа-тенкӗ пухас ӗҫре юлса пырать.

Укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе хакламан ял Совет исполкомӗсем районра татах та пур. Чӑкӑр ял Совечӗн исполкомӗ (председателӗ Ерусланов юлташ), Лапсар ял Совечӗн исполкомӗ (председателӗ Агапов юлташ) тата ыттисем те пӗрремӗш кварталта укҫа-тенкӗ пухмалли плана 7—8-шар процент ҫеҫ тултарнӑ.

Г. ПЕТРОВ.

МУРКАШ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Районри ял Советсенче укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ сӳрӗк пырать. Пӗрремӗш кварталта укҫа-тенкӗ пухмалли плана пӗр ял Совечӗ те тултарман. Шӗвӗш, Пашалукасси, Шетмӗпуҫ ял Совечӗсем плана 12—14-шар процент ҫеҫ тултарнӑ. Ҫак ӗҫре иртнӗ ҫул малта пынӑ Атапай, Оринино ял Совечӗсем те кӑҫал начар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем пӗрремӗш кварталшӑн укҫа-тенкӗ сахал пухнӑ.

Районра укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ ҫапла юлса пыни райфо работникӗсем начар ӗҫленинчен те килет. Налог инспекторӗсемпе агенчӗсем халӑх хушшинче сахал пулаҫҫӗ, парӑмсене вӑхӑтра тӳлеме кирли ҫинчен колхозниксене ӑнлантарса памаҫҫӗ. Ял Совет исполкомӗсен председателӗсемпе колхоз председателӗсем те ҫак кирлӗ ӗҫ ҫинчен манаҫҫӗ. Шӗвӗш ял Советӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Петров, Пашалукасси ял Советӗнчи «Красный Октябрь» колхоз председателӗ Сталев иртнӗ ҫулхи ялхуҫалӑх налог укҫине халиччен те тӳлесе татман.

Ф. МАЛЫШКИН.

Комсомолӑн республикӑри активӗн пухӑвӗ

Мартӑн 3—4-мӗшӗсенче Шупашкар хулинче комсомолӑн республикӑри активӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗн итогӗсем ҫинчен комсомол Обкомӗн секретарӗ Л. Михайлов юлташ доклад туса пачӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче, тет докладчик, пирӗн ҫамрӑксен политикӑллӑ тата производствӑри активлӑхӗ ӳсрӗ. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче комсомолӑн чӑваш организацийӗн ретне ҫӗнӗрен 39.224 ҫамрӑка илнӗ. Комсомол организацийӗ Хӗрлӗ Ҫарпа халӑх хуҫалӑхӗ валли тата ертсе пыракан организацисенче ӗҫлеме кадрсем сахал мар хатӗрлесе пачӗ. 1942 ҫулхи февраль уйӑхӗнчен пуҫласа 4.035 комсомолец большевиксен партийӗн ретне кӗме тивӗҫлӗ пулнӑ. Комсомол организацийӗсен ҫамрӑксем хушшинчи авторитечӗ палӑрмаллах ӳсрӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех комсомол организацийӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ вӑл ҫитменлӗхсене уҫҫӑн палӑртрӗ. Марксизмпа ленинизм теорине, большевиксен партин историне, СССР историне вӗренессине начар йӗркеленӗ, ҫамрӑксене хамӑр ҫӗршыври тата тӗнчери хыпарсемпе паллаштарас ӗҫе ҫителӗксӗр йӗркеленӗ. Комсомолецсем валли лекцисемпе докладсем сайра хутра кӑна ирттереҫҫӗ, лекцисен пахалӑхӗ начар. Политикӑллӑ воспитани ӗҫне час-часах рабочисемпе колхоз ҫамрӑкӗсен тата вӗренекенсен ыйтӑвне шута илмесӗр организациленӗҫҫӗ. Ҫамрӑксемпе куллен таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлемен пирки, комсомол организацийӗсем хуллен ӳсеҫҫӗ. Ҫапла, ВЛКСМ Етӗрне райкомӗ иртнӗ ҫулхи юлашки квартал хушшинче комсомол ретне пурӗ те 17 ҫамрӑка ҫеҫ илнӗ. Ҫулталӑк вӗҫленес умӗн укта 5 организаци саланса кайнӑ. Вӑрнар районӗнчи 86 пуҫламӑш организацирен 48-шӗ иртнӗ ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталта пӗр ҫамрӑка та комсомол ретне илмен. Ҫамрӑксене комсомола явӑҫтарасси Шӑмӑршӑ, Кувакино тата ытти чылай районсенче начар пырать.

Ҫамрӑксене воспитани парас тӗлӗшпе Улатӑрти паровозсем юсакан заводра, Коган юлташ ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ пулса ӗҫлекен заводра начар ӗҫлеҫҫӗ. Унта ӗҫ дисциплинине пӑсни те пулнӑ. Анчах та комсомол организацийӗсем ҫавӑн пек фактсене хирӗҫ ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ.

ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ: ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне пур майсемпе те лайӑхлатса пырасси—комсомол организацийӗсен тӗп задачи пулса тӑрать, тесе кӑтартса пачӗ. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртес тесен, чи малтанах, комсомол активӗн тата мӗнпур комсомолецсен хӑйсен ҫине тӑрса вӗренмелле, хӑйсен пӗлӗвне ӳстермелле. Комсомол организацийӗсен ҫутӗҫ органӗсене ялти ҫамрӑксем валли, каҫхине вӗренмелли шкулсем уҫма пулӑшмалла. Анчах та вӑл шкулсене пур ҫӗрте те уҫман-ха. ВЛКСМ Улатӑр, Шупашкар, Калинино райкомӗсем ҫак кирлӗ ӗҫе хакламасӑр тӑраҫҫӗ.

Нумай клубсемпе вулав ҫурчӗсенче лекцисемпе литература вечерӗсем тата ытти нумай тӗрлӗ мероприятисем ирттерес вырӑнне пӗрмаях ташӑсем организациленӗҫҫӗ. Сӑмахран, Улатӑрти чугун ҫул работникӗсен клубӗнче вӑхӑта пуринчен ытла ташӑ вечерӗсем ирттернипе тултараҫҫӗ. ВЛКСМ Улатӑр хула комитечӗн ҫав клуб ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлемелле. Комсомол райкомӗсем физкультура ӗҫӗпе те кирлӗ пек интересленмеҫҫӗ-ха. ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ физкультура ӗҫне лайӑх организацилеме, спорт мероприятийӗсене тӑтӑшах ирттерме, физкультура ӗҫне ҫамрӑксен анлӑ массине явӑҫтарма хушса хӑварчӗ. Ҫакна пирӗн пурнӑҫа кӗртмелле.

Ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне лайӑх организацилесе пыма культурӑллӑ, нумай пӗлекен тата пурнӑҫ опычӗпе пуян кадрсем кирлӗ. ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн пленумӗ комсомол ӗҫне совет интеллигенцине активлӑн явӑҫтарас задача лартрӗ. Анчах та комсомолӑн хӑшпӗр работникӗсем совет интеллигенцийӗн вӑйӗпе ку таранччен те кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ-ха. Сӗнтӗрвӑрри районӗнче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе йӗркелес тӗлӗшпе тунӑ плансенчен чылайӗшӗсем вӗсене комсомол работникӗсем хӑйсем пурнӑҫлама пултарайман пирки пурнӑҫа кӗмесӗр юлнӑ. Апла пулин те, вӗсем интеллигенцирен пулӑшу ыйтма шутламан. Комсомолецсен ҫамрӑксене культурӑпа, уйрӑмӑн илсен, литературӑпа искусствӑна ӑнланма хӑнӑхтармалла. Ҫак ӗҫре вӗсене пирӗн интеллигенци пысӑк пулӑшу пама пултарать.

Партипе совет правительстви вӑрҫӑн йывӑр условийӗсенче те государствӑн ӗҫ резервӗсен училищисемпе шкулӗсемшӗн вӑйлӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав училищӗсемпе шкулсене тытса тӑма 1944 ҫулта пирӗн республика тӑрӑх кӑна 7 миллион тенкӗ ытла укҫа панӑ. Комсомол ӗҫ резервӗсене хатӗрлес ӗҫе активлӑн хутшӑнать. Анчах та ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ училищӗсемпе шкулсенчи комсомол организацийӗсен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене уҫса палӑртрӗ. Вӗренекенсене ӗҫ ҫине юратса пӑхма кирлӗ тата профессие тӗплӗн алла илме кирли ҫинчен сахал ӑнлантарса параҫҫӗ. Ҫавна пула Улатӑрти чугун ҫул училищинче, Сӗнтӗрвӑрринчи ФЗО шкулӗнче тата ытти чылай ҫӗрте ӗҫ дисциплинине пӑснисем те пулнӑ. Ҫитменлӗхсене пӗтерес тесен, комсомол организацийӗсен вӗренекенсемпе таччӑнрах ҫыхӑнмалла, политикӑллӑ воспитани ӗҫне лайӑхлатмалла, вӗренекенсен пурнӑҫӗнчи ыйтусемпе ытларах интересленмелле.

ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн ӗҫӗсем ҫинчен йышӑннӑ решенисем хыҫҫӑн ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе сахал мар ӗҫленӗ. Анчах комсомол организацийӗсенче тунӑ ӗҫпе лӑплансӑ ларассине, ҫитменлӗхсене курмасӑр тӑрассине, критикӑпа самокритикӑна тивӗҫлипе хакламасӑр тӑнине халӗ те пӗтермен-ха. Ун пек фактсем Ишлей тата Елчӗк районӗсенче пур.

Докладчик комсомолецсене ҫуракине хатӗрленес ӗҫе явӑҫтарасси ҫинчен уйрӑмӑнах тӗплӗн чарӑнса тӑрать. Ҫуракине хатӗрленмелли ҫак ответлӑ тапхӑрта комсомолецсем ялти ҫамрӑксен вожакӗсем пулма тивӗҫлӗ. Комсомол организацийӗсемпе ҫамрӑксем СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ 1945 ҫулта ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли план ҫинчен йышӑннӑ постановление пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗре активлӑн хутшӑнса ӗҫлемелле.

Комсомол активӗн задачи халӗ — ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗн решенийӗсене анлӑн ӑнлантарса парасси, ҫапла вара ҫамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗҫне малалла лайӑхлатса пырасси пулать.

Михайлов юлташ докладӗ тӑрӑх прениере 23 ҫын тухса каларӗҫ.

Салюкова юлташ (Улатӑр хули) ҫамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗҫӗн ҫитменлӗхӗсем комсомол активӗ ҫителӗксӗр ӗҫленинчен килнине палӑртать.

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ **Медведев** юлташ вулав ҫурчӗсемпе культура ҫурчӗсен ӗҫне чылай районсенче йӗркелеменнине палӑртрӗ. Кувакино районӗнче 9 вулав ҫурчӗ халӗ те ӗҫлемеҫҫӗ.

Чугунов юлташ (ВЛКСМ Обком пленумӗн членӗ) Комсомолӑн Ишлей райкомӗн ӗҫне хытӑ критиклерӗ. Ишлей райкомӗ хӑйӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшмасть, чылай чухне ВЛКСМ Обкомӗн решенийӗсене те пурнӑҫламасть. Комсомол Обкомӗ те дисциплинӑна пӑхӑнман работниксене шеллесе тӑрать-ха.

ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ **Трусова** юлташ хулари ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен каларӗ.

Шупашкар районӗнчи «Труд» колхоз председателӗ, комсомолец **Виноградов** юлташ комсомолецсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫе мӗнле хутшӑнса ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗ.

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ **Макаров** юлташ комсомол организацийӗсем умӗнче всеобуч законне пурнӑҫлас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем ҫинчен каларӗ.

Комсомол активӗн пухӑвӗнче Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ **З. А. Андреева** юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине уявлама хатӗрленес ыйтусем ҫинче чарӑнса тӑчӗ тата комсомол организацийӗсем фронтовиксен ачисене пулӑшассине вӑйлатма кирли ҫинчен каларӗ.

Актив пухӑвӗ хупӑнас умӗн ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ **И. М. Чарыков** юлташ пысӑк сӑмах тухса каларӗ. Чарыков юлташ, ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ палӑртнӑ ҫитменлӗхсем комсомолӑн Чӑваш республикинчи организацийӗн ӗҫӗнче те пуррине палӑртса, актив умне чылай практикӑллӑ задачӑсем лартрӗ. Чарыков юлташ уйрӑмӑнах ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеме кирли ҫинчен каларӗ, республикӑри комсомол организацийӗсемпе ҫамрӑксене 1945 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешме чӗнчӗ.

Актив пухӑвӗ ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗн постановленийӗсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе тӑтӑклӑ решени йышӑнчӗ.

Пуху участникӗсем, вӑйлӑн хавхаланса, Верховнӑй Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ **Сталин** юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑнчӗҫ.

Пухура Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ **Матвеев** тата ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ҫумӗнчи Парти Контроль Комиссийӗн Чӑваш республикинчи Уполномоченнӑйӗ **Логвин** юлташсем пулчӗҫ.

КАМЧАТКӐРА АВАЧИНСКИ ВУЛКАН СИРПӖТМЕ ПУҪЛАНА

Камчаткӑра Петропавловск ҫывӑхӗнчи Авачински вулкан, 1938 ҫултанпа лӑпкӑ тӑнӑскер, сирпӗтме пуҫланӑ. Вулкан шӑтӑкӗнчен хура тӗтӗм палкаса тухнӑ, вӑйлӑ взрывсем илтӗнеҫҫӗ, шӑтӑкран вут-хӗм сирпӗнсе тухать. Вулкан таврашне тӗтӗм хупласа илнӗ тата кӗл вӗҫсе тӑрать.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

КОММУНИСТСЕМПЕ КОМСОМОЛЕЦСЕМ ВĔРЕНЎРЕ

ЕТЕРНЕ. Кăтăшри пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи политшкул иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Халиччен 8 заняти туса ирттернĕ. Кашни заняти 4 сехет хушши пырать. Занятисем пуçланас умĕн 20—30 минута хушши политинформаци ирттереççĕ. Ку ĕçре радиопа тата карттăпа анлăн усă кураççĕ. Юлашки занятире союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ Конференцийĕ çинчен доклад туса панă.

Тĕнчери лару-тăру çинчен доклад итленĕ хыççăн, политшкулăн тĕп занятийĕ пуçланать. Кашни заняти икĕ пая пайланать: ВКП(б) историйĕн кĕске курсне вĕренме 3 сехет, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренме 1 сехет. Ку тарана çитсе, ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн 2 сыпăкне вĕренсе пĕтернĕ, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклад таран вĕреннĕ.

ВКП(б) историйĕн кĕске курсне вĕренес тĕлĕшпе калаçусене Н. Ивановпа Н. Степанов юлташсем ирттереççĕ. Вĕсем калаçусем ирттерме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. И. В. Сталинăн «Ленинизм ыйтăвĕсем» ятлă кĕнекине усă кураççĕ. Кашни калаçу валли конспектсем çырса хатĕрлеççĕ. Конспектсене калаçусем ирттериччен малтан ВКП(б) историйĕн кĕске курсне лайăх пĕлекен юлташсем тата ВКП(б) райкомĕн пропаганда отделĕнче ĕçлекенсем пăхса тухаççĕ. Калаçусем тума хатĕрленнĕ Н. Ивановпа Н. Степанов юлташсем пĕр-пĕрин конспекчĕсене вуласа тухаççĕ, юсаççĕ. Çакă вара калаçусене лайăх ирттерес тĕлĕшпе питех те пулăшать.

Шкула çÿрекенсен вĕренес хаваслăхĕ питех те пысăк. Çакна вĕренекенсем шкула сиктермесĕр çÿрени те, вĕсем вĕреннĕ темăсем тăрăх лайăх ответсем пани те аван кăтартса парать. Вĕренекенсем мĕнле ăнланнине тĕрĕслес тата вĕреннĕ материала çирĕплетсе хăварас майпа занятисенче руководитель вĕренекенсене малтанах хатĕрленĕ ыйтусене парать. Унсăр пуçне парти историйĕн кашни тапхăрĕ хыççăн материала епле ăнланнине тĕрĕслемелли пĕр заняти туса ирттереççĕ. Ку занятисенче вара çĕнĕ темăсем вĕренмеççĕ, 4 сехечĕпех ыйтусемпе ответсем пулаççĕ.

Политшкул занятийĕсем эрнере пĕрре — ытларикун пулаççĕ. Çак кун вара ял Советĕнче, колхозсенче, шкулсенче нимĕнле пухусемпе канашлусем те пулмаççĕ. Çакă вăл пур вĕренекенсене те шкула пĕр сиктермесĕр çÿреме май парать. Шкулта вĕренекенсене заняти хăçан, мĕне сехетре пулассн çинчен уйрăммăн пĕлтерес йăла çук, вĕсем ун çинчен лайăх пĕлсе тăраççĕ. Малтанхи пĕр-икĕ занятире хăшпĕр коммунистсемпе комсомолецсем шкула япăхрах çÿренĕ. Анчах политшкул руководителĕ çак ĕç пирки коммунистсемпе комсомолецсен пухăвĕсенче сÿтсе-явма ыйтсан, шкула çÿресси лайăхланнă.

Шкул хăйĕн ĕçне лайăх туса пыни коммунистсемпе комсомолецсене марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланма, хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерме нумай пулăшать.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Вăрман касакан Люциан Барилло

Вăл вăрмана пынă чухне ир çутти вăйĕ тин кăна палăрма пуçланă-ха. Йывăçсем вăл вăхăтра тĕтре ăшĕнче. Уççăн мар, эрăш-пирĕш юпасем пек, ăнланмалла мар кĕлеткесем пек, курăнаççĕ. Пĕлĕт вăрман тăрринченех сыпăнса кайнă аслăк майлă туйăнать; таврара нимĕнле сас-чĕвĕ те çук...

Астан. хăш йывăç тĕлĕнчен ĕçлеме пуçламаллине палăртса, Люциан Иосифович Барилло ĕç вырăнĕ хатĕрлеме пуçлать: юр нумай—ăна хырать; йывăçсем хушшинче унта-кунта туратсем курăнаççĕ—вĕсенчен çăлăнать; йывăça касса ярсан, вăл ăнсăртран каялла е айккинелле сиксе каймалла пултарать. апла-тăк унтан сыхланмалла — Барилло чакмалли хăрушсăр вырăнсем хатĕрлет. Çапла ĕç вырăнне тĕплĕн хатĕрленĕ хыççăн тин Барилло тучковăй пăчкăна алла илет.

— Ну, пуçларăмăр!—тет вăл хăйне хăй.—Виçĕ нормăран кая ан пултăр паян та!..

Ытти вăрман касакансем ĕçе тухнă вăхăта Барилло ĕнтĕ темиçе йывăç йăвантарнă. Ун çитĕнĕвĕсене икĕ меслет татса парать: вăхăта сая ямасни тата пĕлсе, тĕплĕн ĕçлени.

Акă ÿкрĕ пĕр йывăç, ÿкрĕ тепри. виççĕмĕш, тăваттăмĕш... вуннăмĕш, вуникĕмĕш... Пăхатăн та куратăн: кашни виçе çинче тăрать: туратсене тасат та, татма пуçла—пĕр йывăçĕ те пăчка хĕсмĕ, кашни йывăça вырăнтан сиктермесĕрех вакланă, пуçтарăн. нихăш йывăçĕ те сан вăйна усăсăр пĕтермĕ. тарлатмĕ. вăхăтна ахальтен çухатмĕ.

— Я валю в елку. Хорошо так! — тет Барилло. Унăн пăчкипе пуртти—ялан вырнаçуллă та çивĕч, хуçи мĕн хушнине тĕрĕс тăваççĕ, нихăçан та нимĕнпе те тарăхтармаççĕ.

— Инструментсем? О-о-о, вĕсем ăслă пулмалла!—тет Барилло.

Майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшне çитиччен—тăватă уйăх çурă хушшинче—Люциан Иосифович 52-ри белорусс çынни, пĕр печчен 807 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. Чарăнăр та шухăшласа тăрăр пăртак: мĕн таран ĕç тунă вăл?..

Çав вăхăт хушшинче вăл пĕччен Шупашкар районĕнчи çак колхозсен планне тултарнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăнне—250 кубометр, «II-мĕш пятилетка» колхозăнне—203 кубометр, «Культура» колхозăнне—140 кубометр. Водопьянов ячĕпе тăракан колхозăнне—64 кубометр..

Ноябрь уйăхĕнче—13 кун хушшинче — 84 кубометр, декабрь уйăхĕнче (виçĕ кун ĕçлемен)—272 кубометр, январь уйăхĕнче (5 кун командировкăра пулнă)—210 кубометр каснă.

— Ĕçĕме кура—укçи,—каласа парать Барилло юлташ кулса.—Хăшпĕр уйăхра эпĕ 2.000 тенкĕ те илнĕ; çулталăк хушшинче мана тата мĕнпурĕ 125 метр мануфактура пачĕç—премн шучĕпе; ĕçкунĕ шучĕпе çав вăрман ĕçĕшĕнех колхозсенчен тата 130 пăта ыхăн тырă илмелле. Аçта унта ĕçлемесĕр чăтăн!...

Каçхине эпир иккĕнех юлсан, Барилло юлташ сăмах майăн ĕлĕкхисене, иртнисене аса илчĕ, хальхи кунсем çинчен сăмах хушрĕ...

— Эпĕ Хĕвеланăç Белоруссирен, хресчен çемьинчен. Ачаллах Польша панĕсем патĕнче ĕçлеме тиврĕ: вĕсене лайăх пĕлетĕп. Вĕсем патĕнчен, 13 çулхи ача, Донбаса тартăм. çулталăк ĕçлерĕм те... кăмрăк айне пултăм, шахтăра. ишĕлчĕк айĕнче 12 талăк асапланатăмăр. Унтан—чугун çул çине курăм. Чугун çул çинче ремонт ĕçĕпе 34 çул ĕçлерĕм. Вăрçă пуçланчĕ—вутă хатĕрлеме тытăнтăм. Вăрмантан тухмаппа пĕрех. Пурĕ мĕн чухлĕ касса хатĕрленине халĕ ĕнтĕ калаймастăп. Тÿррипе каласан, чи пысăк савăнăçĕ—шутласа пынинче мар, ĕçре. Пăхатăп та куратăп: пысăк ĕç тăватпăр, ирсĕр тăшмана çĕнтерме чăннипех пулăшатпăр—çакă савăнтарать те.

В. РЗАЙ.

Пĕрисем—çыраççĕ, теприсем—çĕлеççĕ...

КАЛИНИНО. Кăçал районри колхозсенче лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслес тĕлĕшпе хĕлĕпех комиссисем ĕçлеççĕ. Малтанах тăватă комисси, унтан пилĕк комисси ĕçлетчĕç, каярахпа вара комиссисен шучĕ вуннă таранах ÿсрĕ. Çав комиссисем чылай колхозсенче лашасемпе тĕрĕс мар усă курнине. вĕсене çапса суранлатса пĕтернисене. япăх пăхнипе ырханлатса янисене палăртса, темиçе вуншар акт çырчĕç. Колхозсене комиссисем парса хăварнă сĕнÿсене пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăма çав актсене районри çĕрĕç пайне тăратнă.

Пысăк та ответлă ĕç турăмăр, терĕç комисси членĕсем. Эпир те вĕсем пĕчĕк ĕç турĕç тесе каласшăн мар.

Анчах райçĕрĕç пайĕ çав комиссисен сĕнĕвĕсене колхозсенче пурнăçа кĕртсе пынине мĕнле тĕрĕслесе тăрать-ха? Кĕскен каласан, тĕрĕслÿ ĕçĕ пачах та пулман. Комиссисем кÿрсе панă актсене папка хушшине пăрахнă та—ĕçĕ пĕтнĕ. Ана çак тĕслĕхсем аван çирĕплетсе параççĕ.

Кÿлхĕрринчи «Трактор» колхозра малтанхи комисси 50 лаша питĕ ырханланса çитнине палăртнă.

Тепĕр уйăх иртсен, иккĕмĕш комисси «Трактор» колхозра 60 лаша ырханланнă тесе палăртнă. Февраль уйăхĕнче пулса иртнĕ виççĕмĕш комисси вара «Трактор» колхозра 74 лаша ырханнине палăртнă. Çав лашасене комисси ĕçрен хăтарса лайăх апат çине тăратма хушса хăварнă. Акт çырса райçĕрĕç пайне панă. Апла пулин те, «Трактор» колхозра лашасене халĕ те кирлĕ пек пăхмаççĕ. Кунсеречех ялта 2—3 ниме пулать. Унта кашни кунах 30-40 лаша ĕçлет.

«Заря» колхозри лашасене çуррине ытла хăмăт е ĕнерчĕк тивертсе юрăхсăра кăларнă. Анчах лашасене чунсăррăн пăхакансене пĕрне те ответ тыттарман. Мĕншĕн тесен колхоз председателĕ Н. Быков, бригадирсем Д. Зайцев тата П. Прокопьев юлташсем куллен ĕçех ниме тăвакан колхозниксем патĕнче ĕçсе çÿреççĕ.

Акă, Кадеркинăри «Молния» колхозра, иртнĕ çуркунне выльăх апачĕсене тирпейсĕр тыткаланипе, вăрлаттарса пĕтернине пула, лашасем чылай вилнĕ. Çав колхозра лашасене пăхас ĕç халĕ те япăх, 16 лашаран 2—3 лаша кăна кÿлсе çÿреме юрăхлă.

Колхозсенче ĕç лашисене киревсĕр тыткаласа çĕмĕрсе, суранлантарса пĕтерни çинчен райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ И. Николаев, старши зоотехник Н. Иванова юлташсем пĕлсех тăраççĕ, анчах çавăн пирки нимĕн те шарламаççĕ. Комиссисем актсем çыраççĕ, вĕсене вара çĕрĕç пайне яраççĕ. Унта актсене çĕлесе хураççĕ. Çапла вара Калинино районĕнче пĕрисем—çыраççĕ, теприсем—çĕлеççĕ, анчах лашасене пăхасси пĕртте юсанмасть.

Е. ДВОРОВ.

ПРОФСОЮЗСЕН ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ПУЛТАРУЛĂХ СМОТРĔ ВĔÇЛЕНЧĔ

Кăçалхи январĕн 18-мĕшĕпе февралĕн 19-мĕшĕ хушшинче Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисенче тата вĕренÿ заведенийĕсенче профсоюзсен художествăллă пултарулăх смотрĕ пулса иртрĕ. Смотра 14 хор кружокĕ тата хăйсен пултарулăхне уйрăммăн кăтартакансем 60 çын хутшăнчĕç, пурĕ 450 çын ытла пулчĕç. Хулари ĕççыннисем смотра пысăк хаваслăхпа пăхрĕç.

Мартăн 2-мĕшĕнче хулари смотр вĕçленчĕ. Смотр комиссийĕ пăхса тухнă тăрăх. 10 хор кружокĕ тата хăйсен пултарулăхне уйрăммăн кăтартакансем 16 çын республикăри смотра (вăл март уйăхĕн вĕçĕнче пуçланать) хутшăнаççĕ.

Хулари смотр комиссийĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Çыхăну управленийĕн хорĕ (руководителĕ Деннемарк) пĕрремĕш вырăна, эрех завочĕн хорĕ (руководителĕ Воробьев) тата пир-авăр фабрикин хорĕ (руководителĕ Даннемарк) иккĕмĕш вырăна, Петрушков юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен заводăн хорĕ (руководителĕ Орлов-Шуçăм) виççĕмĕш вырăна йышăнчĕç.

Уйрăммăн тухса юрлакансенчен Виноградова (Çыхăну управленийĕ), Колесина (Петрушков юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен завод), Горбунов (Кашкаров юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен завод) юлташсем пĕрремĕш вырăна, Николаевăпа Рябых (пир-авăр фабрики), Рукавишникова (Кашкаров юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен завод), Мацур (Çыхăну управленийĕ), Фроймач тата Бурсук (эрех завочĕ) юлташсем иккĕмĕш вырăна, Золина (пир-авăр фабрики), Калинкина (Кашкаров юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен завод), Сретенская (ялхуçалăх институчĕ) юлташсем виççĕмĕш вырăна йышăнчĕç.

Смотр хулара художествăллă пултарулăх ĕçĕ юлашки вăхăтра ÿссе пынине палăртрĕ. Çавăнпа пĕрлех çакна та калас пулать: хăшпĕр пысăк предприятисен профсоюз организацийĕсем (вăтам тата пуçламĕш шкул работникĕсен союзĕ, медицинăпа санитари работникĕсен союзĕ) смотр тулашĕнче юлчĕç.

Смотра хатĕрленнĕ вăхăтра искусство работникĕсем пултарулăх кружокĕсене пысăк пулăшу пачĕç. Государство филармонийĕнчен кашни коллективах пĕрер çын кайнă.

Хулари учрежденисемпе организацисенчи пултарулăх кружокĕсен, çак тунă ÿсĕмсене малашне те çирĕплетсе пырса, Чăваш республикин юбилейне тата пысăкрах ĕçсемпе кĕтсе илмелле.

Композитор Ф. ЛУКИН.

Республикăри шахмат турнирĕ

Мартăн 3-мĕшĕнче Шупашкарта республикăри 10-мĕш шахмат турнирĕ пуçланчĕ. Турнирта Афанасьев, Безверхний, Каменецкий, И. Никитин, Студенецкий, Смирнов, Журавлев, В. Никитин, Меркулов, Коновалов, А. Никитин юлташсем выляççĕ. Малтанхи турта пĕрремĕш категори шахматистсем Студенецкийпе В. Никитин юлташсем пĕрле вылярĕç. Вĕсем хăйсен партине выляса пĕтермен-ха. Студенецкин çĕнтерме шанчăк пур. Безверхний—А. Никитина, Каменецкий—Коновалова, Журавлев—Смирнова çĕнтерчĕ. И. Никитинпа Меркуловăн выляса пĕтереймен партийĕнче позицисем питĕ кăткăс.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ мартăн 3-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Голландире союзниксен çарĕсем Рурмонд хулипе Венло хулине туртса илнĕ. Германире Мюнхен Гладбах хулинчен çурçĕртерехре союзниксем Дюлькен хулипе Фирзен хулине туртса илнĕ. Союзниксем Крефельд хулине кĕнĕ. Нейсс хулине йышăннă. Кельн хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен чăçĕсем Бедбург хулипе Бухгольц хули патнелле куçса пынă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, мартăн 2-мĕшĕнче ирхине тата кăнтăрла та çулйĕрсем çине тата Кельн хулинчи ытти объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Дюрен хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем 4 километр малалла кайнă. Гимних хулине кĕнĕ. Виссерсхейм тата Эрп пункчĕсене нимĕçсенчен тасатнă. Союзниксен танковăй чăçĕсем Борр хулипе Фрисхейм хулине кĕнĕ. Союзниксем Геймбах хулине тăшмантан тасатнă та Рур шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре кăнтăралла куçнă. Прюм хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Винрингер хулипе Зефферн хулине йышăннă.

Союзниксен танковăй тата пехотнăй чăçĕсем Трир хулине туртса илнĕ. Союзниксен çурçĕр-хĕвеланăç енчен куçса пыракан çарĕсем Трир хулинчен 4 километр малалла кайнă, Керш ялне туртса илнĕ. Трир хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксем Саар шывĕпе Мозель шывĕ пĕрлешнĕ тĕлте Конц-Картхауз хулине йышăннă.

Мартăн 1-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 7.053 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехри тата хĕвелтухăçнерехри çулйĕрĕсемпе транспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă. Мартăн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух сĕрле çăмăл бомбардировщиксем Берлинри тата Кассельри объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ мартăн 3-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире союзниксен чăçĕсен патрулĕсем кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Линц районĕнчи (Австри) тата Бреши районĕнчи (Çурçĕр Итали) çулйĕрĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Пюльхельм çывăхĕнче, Кельн хулинчен 5 километрта, союзниксен çарĕсем 4 нимĕç хулине тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Пюльхельм хули патне çитнĕ, Кельн хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре икĕ хулара çапăçаççĕ. Кельн хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксем 4 хула тытса илнĕ. Маас шывĕпе Рейн шывĕ хушшинче, Гохвальд вăрманĕнчен хĕвелтухăçнерехре, тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать. Рер шывĕ секторĕнче наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем Рейхсвальдран кăнтăртарахра куçса пыракан чăçсемпе çыхăннă. Пĕтĕмĕшпе илсен, мартăн 3-мĕшĕнче 24 хулапа ял тытса илнĕ. Мартăн 2-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 9.599 çынна тыткăна илнĕ.

Союзниксен сводкинче çавăн пекех Эрфт кÿлли районне нимĕçсенчен тасатни çинчен пĕлтернĕ. Прюмран кăнтăртарахра союзниксен танковăй чăçĕсем Нимс шывĕ урлă каçнă. Союзниксем Битбург хулинчен 16 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Нимс шывĕ патĕнчи çÿллĕ вырăна хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Союзниксен танковăй отрячĕсем Трир хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Килль шывĕпе Мозель шывĕ пĕрлешнĕ вырăна çитнĕ.

Пĕр эрне хушши лăпкă тăнă хыççăн союзниксем Форбах районĕнче хăшпĕр çитĕнÿсем тунă. Кунтан кăнтăртарахра союзниксем Германири Саар шывĕн хĕвелтухăç хĕррипче, Бубинген хулинчен çурçĕртерехре, пăртак малалла куçнă.

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Италире Адриатика секторĕнче 8-мĕш армин чăçĕсем тĕреклетнĕ темиçе пункт йышăннă, темиçе çынна тыткăна илнĕ. 5-мĕш армин çарĕсем Делла Тораччиа ятлă çÿллĕ вырăнтан çурçĕртерехре хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ДЮССЕЛЬДОРФ ХУЛИ ПАТĔНЧЕ РЕЙН ШЫВĔ ÇИНЕ ТУХНĂ

Эйзенхауэр генерал хĕвеланăç фронтĕнчи наступлени мĕнле пыни çинчен калани

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал мартăн 2-мĕшĕнче каçхине çапла каланă: «Февралĕн 8-мĕшĕнче, Канадăн 1-мĕш армийĕ пуçласа янă наступление пĕр эрне каярах 9-мĕшпе 1-мĕш армисем хутшăнчĕç. Çав наступленин çитĕнĕвĕсем çав тери пысăк, пирĕн çухатусем, хамăр телее кура, пысăк мар. 9-мĕш арми Дюссельдорф хули патĕнче Рейн шывĕ çине тухрĕ, Симпсон генерал-лейтенантăн çарĕсем сахалтан та 17.500 нимĕçе тыткăна илнĕ».

СОЮЗНИКСЕН МАЛТИ ЧАÇĔСЕМ КЕЛЬН ХУЛИПЕ ПĔРЛЕШСЕ ЛАРНĂ ЯЛСЕНЕ КĔРСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Америкăн 1-мĕш армийĕн штабĕ пĕлтернине парать. Унта çапла каланă: Америкăн 104-мĕш дивизийĕн малти чăçĕсем паян ирхине Кельн хулипе пĕрлешсе ларнă ялсене кĕрсе кайнă.

АМЕРИКАНЕЦСЕН 1.900 САМОЛЕЧĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен Францири сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 1.200 бомбардировщикĕ, ытла мартăн 2-мĕшĕнче Магдебург хулипе Лейпциг хулинчен кăнтăртарахра ларакан Болен хулинчи синтетически горючи завочĕсене, Болен хулинчен кăнтăртарахра ларакан Розиц хулинчи нефть тасатакан заводсене, Крупп фирмин Магдебург хулинчи танксем тăвакан пысăк заводне тата Хемниц хулипе Дрезден хулинчи чугун çул деповĕсене тапăннă.

Бомбардировщиксене 700 истребитель ытла хÿтĕлесе пынă.

АМЕРИКАНЕЦСЕН 2.000 САМОЛЕЧĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 3-мĕшĕнче американецсен 2.000 самолетне яхăн Германири тĕрлĕ объектсене вăйлă тапăннă. Пуринчен те ытларах бомбăсем промышленность предприятийĕсемпе синтетически горючи завочĕсем çине пăрахнă.

ФИНЛЯНДИ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇ ВĂРÇĂПА ТУХНИ ÇИНЧЕН ОФИЦИАЛЬНĂ ПĔЛТЕРНИ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Финлянди правительстви Финлянди Германие хирĕç вăрçăпа тухни çинчен официальнă пĕлтернĕ.

СОФИЯ ХУЛИНЧЕ СЛАВЯНСЕН МИТИНГĔ УÇĂЛНĂ

СОФИЯ, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер София хулинче славянсен митингĕ уçăлнă.

Митинга уçнă вăхăтра регентсем, Болгари правительствин членĕсем, Отечественнăй фронтăн центральнăй комитечĕн членĕсем, Союзниксен Контроль Комиссийĕн членĕсем тата ытти çынсем те пулнă.

Митингра Мускаври, Польшăри, Чехословакири, Югославири мĕнпур славянсен комитечĕсен представителĕсем те пур.

Митингра пулнисем Сталин Маршал патне, США президенчĕ Рузвельт патне, Англи премьер-министрĕ Черчилль патне, Тито маршал патне тата Г. Димитров патне саламлă телеграммăсем янă.

Малта пыракансен опычĕпе паллаштарас майпа

„Ĕмĕт“ колхозăн агропланĕ

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса ĕçлесе, Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз членĕсем 1944 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Пĕтĕмпе 315 гектар çĕр лаптăкĕ çинчи кашни гектартан 16,1-шер центнер тĕштырă пухса илнĕ. Уйрăм культурăсем татах та тухăçлăрах пулнă. Сăмахран, кашни гектартан ыраш вăтам шутпа 22,4 центнер, кĕрхи тулă 18 центнер, вир 19 центнер, вăрлăхлăх вика 22,5 центнер илнĕ. Çĕрулмипе кантăр вăрлăхĕ те планпа пăхнинчен нумай ытларах пухса илнĕ.

Çакăн пек вăйлă тырпула колхоз малта тăракан агротехникăна тĕплĕн пурнăçласа пынипе кăна тума пултарнă. Çуркунне иртерех те кĕске вăхăтра, кĕрхи çĕртме тунă вырăна, таса та лайăх вăрлăхпа акни, çĕре тĕрлĕ удобренисемпе çемçетни, тырпула çумкурăкĕсенчен тимлĕн тасатса тăни,—çаксем ĕнтĕ колхозăн тĕп ыйтăвне тăракан агромероприятийĕсем. Çак мероприятисене пурнăçласа пыни колхоза вăйлă тырпул туса илме май парать.

Колхозниксем иртнĕ çул тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтрах çитес çулхи пысăк тухăçлă тырпулăн никĕсне хывса хăварнă. Кĕрхи тырăсене 120 гектар, вăхăтра та çĕре лайăх ĕçлесе çемçетсе акнă. Августăн 24-мĕшĕ тĕлне ырашăн юлашки гектарĕсене акнă. Акасса вара таса та имçампа чÿхенĕ вăрлăх тата пĕтĕмпех сеялкăпа акнă. Сентябрĕн 24-мĕшĕ тĕлне колхоз кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. 113 гектар вырăнне 120 гектар сухаланă. Колхозниксем кĕркуннех çитес çуракине хатĕрлеме тытăннă. Кашни культурăн вăрлăхне çитĕклĕ таран хывса хăварнă. Пур вăрлăха та декабрь уйăхĕнчех райсемхозăн «ВИМ-2» маркăллă машинипе тасатнă.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн ăнăçлăхне агротехникăна лайăх пĕлекен кадрсем татса параççĕ. Çавăнпа та кунта кĕркуннерехпех агрокружок ĕçлеме тытăннă. Çав кружокăн занятийĕсене колхоз ĕçне хутшăнакан кашни колхозникпе колхозница çÿрет. Хĕллехи вăрăм çĕрсенче колхозниксем, Дмитриев агроном ертсе пынипе, вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме вĕренеççĕ.

Колхоз хăйĕн вăрлăхĕсене çулран çул лайăхлатса пырать. Вăрлăх участокĕсене кĕркуннех паллă туса хунă тата вĕсене бригадăсем çумне çирĕплетнĕ.

Колхоз правленийĕ, агрономпа тата колхоз активĕпе пĕрле, мĕнле тырра хăш участока тата мĕн чухлĕ акмаллине палăртса хунă. Çак ĕçе пусуçаврăнăшне кăтартакан таблица тăрăх тунă. Кашни культурăна 1945 çулта гектартан мĕн чухлĕ илмеллине çирĕплетнĕ. Çак план тăрăх вара хĕллехи вăхăтра кашни бригадăн мĕнле агротехникăллă ĕçсем туса ыталмалине палăртса хунă. Хĕллехи вăхăтра хире 4472 лав тислĕк кăларма пăхнă. Çав задание уйăхсем тăрăх бригадăсене валеçсе панă, ăна кашни бригада пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырать. Унсăр пуçне кашни бригадăн торф, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл тата ытти удобренисем мĕн чухлĕ пухса хатĕрлемелли те паллă.

Кĕрхи тырăсене шăнасран хÿтĕлес тата тăпрара нÿрлĕх ытларах сыхласа хăварас шутпа, колхозниксем уйра кашни çулах юр тытса хăвараççĕ. Хĕллехи вăхăтра тислĕке чи малтан техникăллă культурăсем (махорка, кантăр) акмалли вырăна кăлараççĕ. Хире турттарнă тислĕке пысăк купасем туса хураççĕ.

Иртнĕ кĕркунне колхоз «Авангард» ятлă сортлă ыраш 113 гектар акса хăварнă. Сăртлă тата юр лармасан вырăн кĕрхи тырă акнă çĕрте 86 гектар шутланать. Çав çĕр çинчи калча шăнса ан пĕттĕр тесе, унта юр тытса хăварнă. Кĕрхи тулă сивĕпе хăвăртрах пĕтме пултарать. Çавăнпа кĕрхи тулă акнă лаптăк çинче те юр тытса хăварма уйрăмах тăрăшнă.

Кĕрхи тырăсем акнă çĕр юр айĕнчен пирченсе, хытса тухать. Хытнă тăпра ÿсен тăрансен тымарĕсем патне сывлăш та, нÿрлĕх те ямасть тата вăл час типет те çуркаланса пĕтет. Пирченнĕ тăпрана çемçетес тата акнă тырăсен тымарĕсене ÿсме кирлĕ пек условисем туса парас, çапăх пекех тырă калчисене хăрнă çульçисенчен тасатас шутпа, кĕрхи тырăсене йывăр сÿрепе йĕркесене урлăн икĕ хут сÿрелеме пăхнă. Çак ĕçе, тăпра сÿре çумне çыпçăнми пулсан, малтанхи кунах туса иртерме палăртнă. Кĕрхи тулă çуркунне ÿсме тытăнсанах, тăпран çиелти сийĕнчен нумай апат ыйтать. Çавăнпа та кĕрхи тулла сÿрелес умĕн кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантараççĕ. Тислĕке çăнăх пек вĕтетсе сапаççĕ. Тулă хăмăла кайсан иккĕмĕш хут апатлантараççĕ. Кунсăр пуçне кашни гектар çине 4 тонна тислĕк шĕвеки сапса апатлантарма палăртнă.

Çуркунне тата çулла тырă калчисене çумкурăксенчен тасатсах тăмалла. Вăрлăх участокĕ çинчи культурăсене çумкурăксенчен кăна мар, ытти тырă калчисенчен те тасатма палăртнă.

Колхоз «Лютесценс-062» сортлă çурхи тулă акать. Алăпа лайăх суйласа тасатса, çав вăрлăха 1-мĕш класа çитерме пăхнă. Тулă паха культура пулнине шута илсе, ăна кĕрхи çĕртме тунă лайăх вырăна акма пăхаççĕ. Кĕрхи çĕртме тунă пусса 3 хут тĕплĕн сÿрелеме палăртнă.

Çĕре вырăнти тата минераллă удобренисемпе çемçетни тырă тухăçлăхне нумай ÿстерет. Çавăнпа та вăрлăх участокĕ валли уйăрнă 9 гектар çĕр лаптăкĕ çине кашни гектар пуçне 120-шер лав тислĕк тăкма пăхнă. Унсăр пуçне, вăрлăх участокĕсене сухаланă хыççăн сÿрелеччен кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантараççĕ. Тулла пĕтĕмпех яровизацилесе сеялкăпа, кашни гектар пуçне 18-шер центнер акаççĕ. Çумкурăксене ÿсме чарас тата тăпрари нÿрлĕхе упраса хăварас шутпа, вăрлăх участокне 2—3 сантиметр хулăмĕш вакă улăмпа е вăрлăха пăсман ытти япалапа витеççĕ. Тулă çинче çумкурăксене ÿсме парас мар шутпа, тулă калчине икĕ хутчен çумласа тасатма пăхнă.

Колхоз «Диппе» сортлă сĕлĕ акать. Сĕлĕ акма кĕрхи çĕртме тунă вырăна тепĕр хут сухалаççĕ. Сĕллĕн тепĕр пайне кĕрхи çĕртме туман вырăна, 16—18 сантиметр тарăнĕш сухаласа акаççĕ. 22 гектар çине кашни гектар пуçне 100-шер лав лайăх вĕтетнĕ торф тăкма пăхнă. Вăрлăхлăх сĕлĕ участокĕ 10 гектар пулать. Çав çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕ çине 90 лав компост тăкма пăхнă. Хуçалăхра кирлĕ пулакан 22 гектар сĕлле те, вăрлăх участокне акнă пекех, яровизацилесе, сеялкăпа акаççĕ. 2-мĕш номерлĕ уйра йывăр та хытса каякан тăпраллă вырăнсем пур. Çав участоксенчи тырăсем пĕр харăс шăтмасан, вĕсене мăка шăллă, çăмăл сÿресемпе сÿрелеме пăхнă.

Колхоз «Долинское» сортлă вир акать. Ăна ĕлĕк улăх пулнă вырăна, çуркунне сухаласа акмалла. Вире яровизацилесе тата пĕтĕмпех сеялкăпа акаççĕ. Вăрлăх участокне вара сарлака ретлĕн, икĕ йĕрлĕ майпа акаççĕ. Çав участок çинчи тăпра хытса, хуппăланма тытăнсан е унта çумкурăксем тухсан, йăран хушшисене çемçетсе кăпкалатаççĕ, çумкурăксенчен тасатаççĕ.

Колхоз «Виктория Мандорфская» сортлă пăрça акать. Пăрça вăрлăхне пĕтĕмпех алăпа суйласа тасатмалла. Çавăн пек таса вăрлăх акни пăрça тухăçлăхне чылай ÿстерме май парать.

Техникăллă культурăсенчен колхозра кантăр акаççĕ. Кантăра 4-мĕш номерлĕ хире кĕрхи çĕртме тунă вырăна акма пăхнă. Акас умĕн тăпрана хатĕрлесси çанталăкран килет. Çанталăк нÿрлĕ тăрать пулсан, çав участока плугпа 16—18 сантиметр тарăнĕш сухалаççĕ, уяр çанталăк пулсан, плуг тĕренĕн çунапĕсене илсе сухалаççĕ. Кантăр тĕрлĕ удобренисем ыйтать. Çавăнпа та кантăр акмалли вырăна сухаласа хатĕрличчен лайăх çĕрнĕ тислĕк тăкса çемçетме пăхнă. Акасса пĕтĕм лаптăкне сеялкăпа тата хĕреслĕ меслетпе акаççĕ. Уяр çанталăк тăрсан, кантăр акнă вырăна пĕтĕмпех мульчировани тăваççĕ.

Çĕрулми культури валли те агроплан тунă. Колхозра пысăк тухăçлă «Лорх» сортлă çĕрулми акаççĕ. Çĕрулми лартиччен тăпрана лайăх çĕрнĕ тислĕкпе кĕл тăкса çемçетеççĕ. Вăрлăх участокĕ çине удобрени ытларах тăкма пăхнă. Агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынипе пула, кунта иртнĕ çул кашни гектартан 262 центнер çĕрулми илнĕ. План тăрăх 150 центнер илме пăхнă пулнă. Иртнĕ çул кунта çĕрулмине шăнтарса лартнă. Кăçал та ăна пĕтĕмпех шăнтарса лартма пăхнă. Çĕрулмине 80—100-шер грамм туртаканнисене суйласа лартаççĕ. Лартнă хыççăнах, сÿре шăлĕсене çÿлелле туса, пĕтĕм çĕр лаптăкне якатса хураççĕ. Çĕрулми калчисем шăтса тухиччен кĕске шăллă сÿрепе йăрансене урлă сÿрелеме пăхнă. Çĕрулми йăранĕсене çу кассиччен икĕ хут кăпкалатаççĕ, купалаççĕ. Çумкурăксенчен тасатсах тăраççĕ тата йăрансене тÿрлетсе пыраççĕ. Вăрлăх участокĕ çинчи çĕрулмине чечеке ларнă вăхăтра ытти сортсенчен тата чирлĕ калчасенчен тасатаççĕ.

Колхозăн пĕтĕмĕшле агропланĕ тăрăх кашни бригада валли уйрăм агроплан тунă.

1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн «Ĕмĕт» колхоз кÿршĕри «Пионер» колхозпа ăмăртса ĕçлет. Иккĕленмелли çук, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен çак агропланне тивĕçлипе пурнăçласа пырсан, ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлесен, кăçал татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илĕç.

Г. ТИМОФЕЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31.

НТ 00538 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000